Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой **– www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

## Автор: Растворцев Андрей Васильевич

## Книга: Домовёнок Фока и его друзья

## Рассказ: Пӳрт-ҫурт пуҫтарни

Пĕр ăшă та хĕвеллĕ ҫу кунĕ Хĕрт-сурт, Картишҫĕ тата Кăварҫă пурăнакан ҫуртри кил хуҫи арăмĕ пӳрт-ҫурт пуҫтарма шутларĕ. Хĕл каҫса ҫăва тухнă хыҫҫăн яланах ҫапла тăвать вăл. Упăшкипе ачисене вырăн таврашĕсемпе кавирсене шаккаса-силлесе тасатма кил хушшине кăл арче, хăй вара пӳртри ĕҫĕсене тума юлчĕ.

Кил управҫисем виҫҫĕшĕ те ăна пулăшма пикенчĕҫ. Хĕрт-сурт урайĕнчи ҫӳп-ҫапа, кăмака хыҫĕнчи эрешмен картине шăпăр айнелле тĕкет, сĕтел-пукан айĕнчи, диван хыҫĕнчи хĕлĕпе пуҫтарăннă тусана пĕр ҫĕре пухать. Алă ҫитмен вырăнсене кĕрсе тухать вăл, ачасем кăранташ шĕвĕртнĕ чух, канфет ҫинĕ чух ӳкерсе хăварна ҫӳп-ҫапа тупса тухать, Ҫĕнĕ ҫул уявĕнчен пытанса юлнă теттесене, пĕчĕк тӳмĕсене, пластилин юлашкисене, ытти ăпăр-тапăра курăнакан вырăна тур-тать...

Кăварҫă чӳрече кантăкĕ ҫинчи ҫумăр шывĕн йĕрĕсене, ҫыпăҫса-хытса ларнă тĕпренчĕксене куҫа курăнмалла пултăр тесе хĕвел ҫути ӳкерсе тăрать.

Картишҫĕ те тар юхтарсах ĕҫлет. Вăл хăйĕн пĕчĕк урисемпе кавирсене, урай саррисене таптаса тусанне кăларать. Кавирсем ҫинче ташланă чух тусан ҫĕкленнипе питĕ сунаслаттарать, апла пулин те Картишҫĕ хăй ĕҫне пăрахмасть.

Ҫапла яра кун тăрмашрĕҫ. Пурте лăштăрах ывăнчĕҫ: хуҫасем те, кил управҫисем те. Анчах пӳртри тирпейлĕх, таса та уҫă сывлăш ĕшенĕве тӳрех ирттерсе яраҫҫĕ. Чӳрече кантăкĕсем йăлтăртатса кăна тăраҫҫĕ, хĕвел те таса урай тăрăх кăмăллăн шăвать. Кавирсенчен ҫурхи ырă шăршă кĕрет, вĕсем ҫинче пĕр тусан пĕрчи те кураймăн. Сĕтел ҫи виттийĕсем те тасалăхпа ҫиҫсе тăраҫҫĕ. Хуҫа арăмĕ тутлă пӳремеч пĕҫерчĕ. Паллах, кил управҫисене тав тума та манмарĕ. Вĕсем те техĕмлĕ апат-ҫимĕҫпе хăналанчĕҫ. Пурте кăмăллă, пурте хаваслă. Таса кил-ҫурт чуна та тасатать.

Кăварҫă, Хĕрт-сурт тата Картишҫĕ чей ĕҫсе ларнă чухне пĕр-пĕрин умĕнче хăйсен ĕҫĕпе кăштах мухтанкаласа та илчĕҫ. Унашкал йăла ҫук мар ҫав вĕсен.

Чăнах та, хăвăрах шутлăр-ха ĕнтĕ: вĕсем хутшăнмасан, вĕсем пулăшмасан пулаятчĕ-ши ҫакăн пек хăтлăх?!

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.